Выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрленине тĕрĕслетпĕр

# Сарайсене çеç мар, выльăхсене те хĕле хатĕрлемелле

***Раççейре “АПКна аталантарасси” наци проекчĕ ĕçлеме пуçланăранпа пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ. Çак хум кунтан-кун вăй илсе пырать, хамăр çĕршыври рынока ют çĕршывран кӳрсе килмесĕрех выльăх продукчĕсемпе тивĕçтерессипе çĕнĕрен те çĕнĕ утăмсем хресчен еннелле утăмлаççĕ.***

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе йĕркеленĕ комисси вырăнсенче выльăх фермисене хĕле хатĕрленине тĕрĕслессипе малалла ĕçлет. Сарайсене çеç мар, выльăхсене хăйсене те хĕле хатĕрлемелле шухăша асра тытса, район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Анатолий БЕЛОВ çак ыйтусемпе “Районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци” патшалăх учреждени ертӳçин çумĕпе Галина Тимофеевна КИРИЛЛОВАПА тĕл пулса калаçнă.***

**– Галина Тимофеевна, чăн малтанах çакна пĕлес килет: кăçал хĕле районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе килти хушма хуçалăхсенче миçе пуç măйракаллă шултра выльăх кĕрет?**

– Сирĕн шухăшăрпа тата ыйтăвăрпа килĕшетĕп, мĕншĕн тесен фермăсене хĕле хатĕрлесси çинчен калаçма пуçласан çак ыйту малтанах выльăхсене те пырса тивни пирки час-часах манатпăр. Хаçатра çак ыйтăва çутатмаççĕ пулин те, вырăнсенче ку тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттеретпĕр. Ахальлĕн майĕ те çук. Кĕркуннехи-хĕллехи тапхăр выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче чи ответлли шутланать. Çак вăхăтра фермăсене те, выльăхсене те тухăçлă хĕл каçарма хатĕрлесе çитереççĕ. Ку чухне зооветеринари правилисене пăхăнмасан выльăхсен тĕрлĕ чирĕсене çул уçăласси, продуктивлăх чакасси пирки те иккĕленӳ çук. Выльăхсене çарантан сарайне кĕртнĕ вăхăтра таврари температура улшăнни уйрăмах çамрăк выльăхсемшĕн сиенлĕ пулма пултарать. Çакна шута илсе асăннă тапхăрта фермăсенчи хуçалăх ĕçĕсене туса ирттернĕ хушăрах планлă зооветеринари ĕçĕсене сиктерме юрамасть.

Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсенчен тăратнă статистика пĕтĕмлетĕвĕсемпе кăçал хĕл каçма выльăхсем пĕлтĕрхинчен сахалрах кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, măйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ çулталăк хушшинче 8701 пуçран 7225е юлнă. Çак çухатура куллен укçа паракан ĕнесен йышĕ пĕчĕкленни те шухăшлаттарать: вĕсен кĕтĕвĕ пĕлтĕр 3419 пуç пулнă пулсан, кăçал – 3089 пуç. Кун çумне халăхсем килти хушма хуçалăхра усракан 8000 пуç ĕнене хушсан, районта ĕнесен йышĕ самай пысăкки куç умне тухать. Вĕсем вара район территорийĕнче ветеринари тĕлĕшĕнчен сывă лару-тăру тытма куллен тимлĕх ыйтаççĕ. Кунта “АПКна аталантарасси” наци проекчĕ “Сывлăх” наци проекчĕпе тĕл пулать, пĕри теприпе çыхăнать. Апла пулсан яваплăх виçи те икĕ хут ӳсет.

**– Планлă зооветеринари ĕçĕсем терĕр те, мĕн шута хуратăр эсир çакăнта?**

– Ĕнесене хĕллехи тапхăрта тытма фермăсене юсанипе-шуратнипе-дезинфекциленипе пĕрлех çак вăхăтчен вĕсене çĕпĕр язвинчен, ЭмКАРтан, нăрăран вакцинăлани, туберкулезран тата бруцеллезпа лейкозран тĕрĕслени хĕл кунĕсенче сывă выльăх продукчĕсемпе усă курма май парать. Хĕле кĕретпĕр тетпĕр те, эпир паян çĕпĕр язвинчен пĕтĕм ĕнесене тата 4 çула çитичченхи выльăхсене пĕтĕмпех ЭмКАРтан вакцинăларăмăр. Сывлăш температури 14 градусран чакнă май нăрăсем вĕçме чарăннăран халĕ ĕнесене вĕсенчен сыхлассипе профилактика ĕçĕсем туса ирттеретпĕр, măйракаллă шултра выльăхсемпе сурăхсене кĕтӳре çӳретнĕ хыççăн витене хупнă май гельмитозран эмелсем паратпăр. Туберкулезран ĕнесене çуркунне тата кĕркунне, ерекен чирсем сарăласран юн илсе бруцеллезран тата лейкозран тĕрĕслемелле пулсан, çак ĕçсене эпир туса ирттертĕмĕр ĕнтĕ. Районти эпизооти лару-тăрăвĕ шанчăкли паян иккĕлентермест.

**– Ĕнесене хĕллехи тапхăра кĕртнĕ май вĕсен чĕрнисене касасси пирки...**

– Ку ĕçре республикăра пуçланнă çĕнĕлĕхе Муркашсем малтан хăйсем патĕнче ирттерни пĕлтерĕшлĕ. Иртнĕ кунсенче “Зооветснаб” патшалăх унитарлă предприяти ĕне-выльăхсен чĕрнисене касма Словакирен кӳрсе килнĕ станока чи малтан пирĕн районти “Оринино” хуçалăхра усă курчĕç. Каламалла, чĕрне ӳссе кайни ĕнен продуктивлăхне чакарать. Çавăнпа та чĕрне касассине те çулталăкне икĕ хут йĕркелени продуктивлăха тивĕçлĕ шайра тытма пулăшать. Пĕр ĕне чĕрнисене касма 100-150 тенкĕ каять пулсан, çакăн хыççăн ĕне уйăхран 1,5 литр сĕт хушсан... Ыттине калама кирлĕ мар.

**– Галина Тимофеевна, калаçăва хутшăннăшăн, ĕне-выльăхсене хĕле хатĕрлесе мĕнле ĕçсем туса ирттернине ăнлантарнăшăн пысăк тав.**

– Хăвăра тавта пуç. Калаçăвăмăра вĕçлесе вара манăн ял çыннисене кĕркуннехи пасарта ветеринарии справки е свидетельствисĕр выльăхсене сутма-илме тăхтама сĕнес килет. Кун пек чух района лейкозлă ĕнесем Етĕрне тата Туçи Çармăс районĕсенчен килсе кĕрес хăрушлăх пур. Пирĕн патăмăрта ку чир 10 çул ытла çук пулсан, кӳршĕсем ăна тĕппипех пĕтереймен-ха. Документсăр ĕне сывлăхĕ иккĕлентерни пирки пĕр хирĕçлев те çук. Эпĕ халĕ каланине ял çыннисем тĕрĕс ăнланасса шанатăп.



“Выльăх чĕрнине касасси хĕл умĕнхи чи ответлă ĕçсенчен пĕри”, – тет республикăри ветлаборатори директорĕ Н. Мартышкин.



Сывă ĕне – хĕллехи продуктивлăх никĕсĕ.

Эсир пĕлесшĕнччĕ

# Ачан Раççей Федерацийĕн гражданлăхне çирĕплетесси, палăртасси тата йĕркелесси

Кăçалхи февралĕн 6-мĕшĕнче РФ Президенчĕн 2006 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнчи “Раççей Федерацийĕн гражданлăх ыйтăвĕсене пăхса тухмалли йĕрке çинчен” положение улшăнусем кĕртесси çинчен” 1226 № Указĕ пурнăçа кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ачан Раççей Федерацийĕнчи гражданлăхне çак йĕркепе палăртаççĕ тата çирĕплетеççĕ:

– ача пирки сведенисене ашшĕ-амăшĕн паспорчĕ (РФ гражданĕсен) çине çырса хурса, çав шутра ют çĕршыв паспорчĕ çине те, енчен те вăл РФ гражданинĕ пулсан, унта хăçан çырнине та палăртса хăвармалла;

– ача çурални çинчен панă свидетельство çине унăн РФ гражданлăхĕ пуррине палăртса;

– ачана ют çĕршыв паспортне парса.

Ачан РФ гражданлăхне палăртассине тата йĕркелессине ФМСăн территоринчи уйрăмĕ пурнăçлать, ун пирки Раççейĕн Шалти ĕçсен министерстви 2006 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнче 1105 № приказпа ятарлă йĕрке çирĕплетнĕ.

Çурални çинчен свидетельствăпа 14 çула çитиччен ачан РФ гражданлăхне унта çак сведенисене кĕртнĕ пулсан та палăртаççĕ:

– ача ăçта çуралнине пăхмасăрах ашшĕпе амăшĕн е пĕрин РФ гражданлăхĕ пур пулсан;

ашшĕ-амăшĕнчен пĕрин ача çуралнă вăхăтра РФ гражданлăхĕ пур, теприн Раççей гражданлăхĕ çук е вăл хыпарсăр çухалнă пулсан;

– ача çуралнă вăхăтра ашшĕ-амăшĕнчен пĕрин Раççей гражданлăхĕ пур, теприн ют çĕршыв гражданинĕ шутланать, ача Раççей Федерацийĕн территорийĕнче, урăх çĕрте çуралнă пулсан ют çĕршыв ăна хăйĕн гражданлăхне памасть;

– ача Раççей Федерацийĕн территорийĕнче çуралнă, ашшĕпе амăшĕ е пĕри ют çĕршыв гражданĕсем пулни çинчен ачан çурални çинчен свидетельстви çине çырса хунă е вĕсен нимĕнле гражданлăх та çук, ача çуралнă вăхăтра вĕсем е пĕри Раççейре пурăнаççĕ пулсан, е ашшĕ-амăшĕ ют çĕршыв гражданĕсем, анчах та çав çĕршыв ачана хăйĕн гражданлăхне памасть пулсан.

“Раççей Федерацийĕн гражданлăхĕ пирки” 2002 çулхи майăн 31-мĕшĕнчи 62 номерлĕ Федераллă саккунăн 12 статйин пĕрремĕш пайĕпе килĕшӳллĕн ашшĕ-амăшĕн паспорчĕ çине ача РФ гражданинĕ пулни пирки сведенисене е ача çурални çинчен панă свидетельство çине ашшĕ е амăшĕ ыйтнă тăрăх çав кунах паллă тăваççĕ. Енчен те Раççей Федерацийĕн территорийĕнче çурални çинчен панă свидетельствăна икĕ патшалăх чĕлхипе çырнă пулсан, ун пирки А 4 виçеллĕ таса хут çине палăртаççĕ, свидетельствăна пĕрле хурса хут çине çурални çинчен свидетельствăн серийĕпе номерне çырса хураççĕ.

Енчен те ачана усрава илеççĕ пулсан, унăн Раççей Федерацийĕн гражданлăхĕ пуррине сывлăха сиплекен е урăх орган (шкул, ача сачĕ) ертӳçисем ыйтнипе ФМСăн территоринчи органĕ 10 кунран кая юлмасăр палăртать.

Енчен те ыйтнă кунах кирлĕ документсене тăратса çитереймен пирки ача РФ гражданинĕ пулнине палăртма май çук пулсан Раççей ФМСĕн территоринчи органĕ ашшĕ-амăшĕ е пĕрин пирки сведенисене, вĕсем РФ гражданĕсем пулнине е пулманнине тĕрĕслет.

Должноçри çын ача РФ гражданинĕ пулнине çирĕплетекен мĕн пур документсен копийĕсене хатĕрлет, вĕсем пирки ятарлă журнал çине çырса хураççĕ, çирĕплетнĕ йĕркепе упраççĕ.

Енчен те çын çав ыйтупах тепре пырсан ФМСăн территоринчи органĕ ача Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулнине малтан палăртнă документсем тăрăх е территоринчи органран ыйтса пĕлсе палăртать.

Енчен те ача Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулма пăрахрĕ пулсан, ун пирки сведенисене ашшĕ-амăшĕн паспорчĕ тата çурални çинчен свидетельство çине ятарласа хатĕрленĕ штамп лартса çирĕплетеççĕ тата çырса хураççĕ.

Ачан ашшĕ е амăшĕ кăна пулнине суд йышăнăвĕпе çирĕплетеççĕ. Кун пек чухне вĕсенчен пĕри е хыпарсăр çухалнă пулма пултарать е ăна ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтарнă.

Енчен те ача çуралнă, ăна тупса палăртнă хыççăн 6 уйăхран унăн ашшĕ-амăшĕ пирки нимĕнле хыпар та çук пулсан, вăл Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулнине ăна усракан орган (учреждени) ыйтнипе палăртаççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене палăртмалла:

– ача çурални çинчен свидетельство;

– ачана патшалăх учрежденийĕнче усрани çинчен документ;

– ачан ашшĕпе амăшĕ 6 уйăх иртсен те тупăнманинне çирĕплетекен документ.

Ача Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулнине çирĕплетнĕ чухне ашшĕпе амăшĕн е вĕсенчен пĕрин Раççей гражданлăхĕ пуррине çирĕплетекен документ та кирлĕ. Заявление, ачана усрава илес пулсан, Раççей гражданинĕн хăй пурăннă вырăнти тивĕçлĕ органа тăратмалла. Унăн хăйĕнпе пĕрле ача çурални çинчен свидетельство, паспорт (енчен те пур пулсан), ача Раççейре пурăнни пирки документ, усрава илни пирки свидетельство, хăйсем е хăй кам пулнине çирĕплетекен документсем пулмалла.

**З. СОРОКИНА, федераллă миграци службин республикăри управленийĕн Муркаш районĕнчи пункчĕн ертӳçи.**

Юн кунсенчи рубрика

## САККУН ВĂЛ ПУРИНШĔН ТЕ ПĔРРЕ

***РФ прокуратури çумĕнчи Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн уйрăмах кăткăс ĕçсемпе ĕçлекен следователĕ М. Н. ТАРАСОВ.***

# Çемьери хирĕçӳ суда çитерет



**Район хаçачĕ прокуратура ĕçченĕсене час-часах сăмах парать те пĕлес килет. Кăçал çуркунне Шомикри магазин умĕнче упăшки măшăрне хĕненине курма тиврĕ. Киревсĕр ӳкерчĕк. Саккун умĕнче тивĕçлипе явап тытрĕ-ши вăл арçын?**

**Хаçат вулакансем.**

Чăнах та кунашкал ӳкерчĕк пулнă. Айăпли вара Шомик ялĕнче пурăнакан 32 çулхи Алексей Михайлович Иваков. Сутуçăра ĕçлекен арăмне апрелĕн 18-мĕшĕнче ĕç хыççăн Шомикри суту-илӳ магазинĕ патĕнче тĕл пулсан арçын ăна киле пымалла тесе унпа сăлтавсăр хирĕçӳ çĕклет. Сăмахпа каланипе çитмест, măшăрне пуçран темиçе хутчен çапать.

Вăлах апрелĕн 20-мĕшĕнче 10 сехет тĕлĕнче ӳсĕрле măшăрĕпе тĕл пулмалла тесе унăн асламăшĕ патне пырса кĕрет, çĕçĕпе вылятса тата вĕлерессипе хăратса арăмĕ ăçта пытаннине тĕпчет. Кăшт тăхтасан хăй тĕрĕс мар тунине пĕлсе тăрсах А. Иваков кил хуçи ирĕк памасăрах хăйĕн măшăрĕпе тĕл пулма тесе алăк питĕрчĕкне çĕмĕрсе пӳрте кĕрет.

Суд ларăвĕнче А. М. Иваков хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ.

Миравай судья йĕрке пăсаканăн айăпне Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 116-мĕш статйин 1-мĕш пунктĕнче, 119-мĕш статйинче, 139-мĕш статйин 1-мĕш пунктĕнче тунă преступленисем тесе хакларĕ. Унăн пĕчĕк ача пуррине тата айăпа пĕтĕмпех йышăннине çăмăллатакан условисем тесе пĕтĕмĕшле çичĕ уйăхлăха условно майпа ирĕкрен хăтарма йышăнчĕ.

***Район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ Д.М. ВИКТОРОВ.***

# Налук тӳлессинчи йĕркелĕх пĕрлехи тимлĕхрен килет

**Налук тӳлемесен саккунпа ответ тыттараççĕ-ха, анчах район прокуратури çак ĕçре хăйне евĕр вĕрентӳ ирттерет-и? Вăхăтра калани-асăрхаттарни саккуна пăсассинчен пăрăнма çул уçать. Мĕнле шутлатăр?**

**С. КВАСОВА.**



Район прокуратури Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи федераллă налук службин 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕпе тачă çыхăнса ĕçлет. Парăмлă предприятисен ертӳçисемпе тата бухгалтерĕсемпе вĕсен парăм сăлтавĕсене тăтăшах тишкеретпĕр, икĕ еншĕн те усăллă калаçусем ирттеретпĕр. Çак тĕл пулусенче налуксене вăхăтра тӳлемелли çулсене шыранипе пĕрлех ĕç укçи тӳлессипе парăма кĕрсе каясран, ытти саккунсене пăсасран асăрхаттарсах тăратпăр.

Налук тенĕрен. Район прокуратурине вăхăтра налук тӳлессинчен пăрăнакан предприятисем çинчен хыпар килсех тăрать. Кун пек чух йĕрке пăсакансен саккун умĕнче явап тытасси те инçех мар.

# Ĕç укçине уйăхра иккĕ тӳлемелле

**Хуçалăхсенче уйăхĕ-уйăхĕпе ĕç укçи илейменрен ыйтас килет: йĕркеллĕ-и вăл тата ĕç çыннин уйăхне миçе хутчен ĕç укçи илмелле?**

**А. СПИРИДОНОВ.**

Ĕç укçине уйăхĕ-уйăхĕпе тӳлеменни ĕç законодательствине пăсни пулать. Ку ыйтăва район прокуратури тăтăшах кун йĕркинче тытать. Каламалла, пирĕн тимлĕхре ĕç укçипе парăм пулмалла марри çеç мар, ăна тӳлес йĕрке те. Акă районти пĕр организацире Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 136-мĕш статйине пăсса ĕç укçине уйăхра пĕрре тӳленине палăртрăмăр. Саккунпа капла юрамасть. Ĕç законодательствинче палăртнă нормăпа килĕшӳллĕн ĕç укçине уйăхра иккĕ тӳлемелле.

Пирĕн паянхи тĕслĕхре организаци ертӳçине ĕç законодательствине пăснине пĕтерме представлени патăмăр, должноçри çынна дисциплинарлă ответ тыттартăмăр. Кунсăр пуçне ертӳçĕ тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн КоАПĕн 5.27 статйипе право пăснăшăн административлă ĕç пуçарса Чăваш Республикин Патшалăх ĕç инспекцине материалсем ярса патăмăр.

Куратпăр ĕнтĕ, ĕç законодательстви те çирĕп ыйтать.